Муркаш район хаçачӗ

# Çӗнтерӳ ялавӗ

1944 çулхи майăн 5-мӗшӗнчепе тухать

39 (7570) № * Шăмат кун, 2008 çулхи майăн (çу) 24-мӗшӗ * Хакӗ ирӗклӗ

**Н.В. Никольский 130 çул тултарнине халалласа ирттернӗ уявран**

## Ентешӗмӗр ӗçне малалла тăсар

Тăван Муркаш Енӗмӗр пултаруллă та маттур çынсемпе пуян. Вӗсенчен пӗри вара – чăвашсен паллă ученăйӗ, энциклопедисчӗ, историкӗ, этнографӗ, фольклорисчӗ, лексикографӗ, педагогӗ, аслă шкула йӗркелекенӗ, Атăл çи тăрăхӗнчи халăхсен историпе культурине тӗпчекенӗ, «Хыпар» хаçата йӗркелесе яраканӗ Н.В. Никольский. Майăн 19-мӗшӗнче унăн 130 çулхи юбилейне пӗтӗм республикипех паллă турăмăр. Уйкас Янасал тăрăхӗнче, Николай Васильевич çарран чупса çӳренӗ, ачалăхӗпе çамрăклăхӗ иртнӗ вырăнӗсенче вара пысăк уяв пулчӗ. Республикăран килнӗ хăнасене, районти чăваш чӗлхипе литературине, тăван ен культурине вӗрентекенсемпе культура ӗçченӗсене Сосновкăри вӗрентӳпе культура центрӗ умӗнче çăкăр-тăварпа, Васкассинчи Культура çурчӗ çумӗнчи «Талан» эстрадăпа фольклор ушкăнӗ илемлӗ юрăсемпе кӗтсе илчӗ.



Хăнасене – çăкăр-тăварпа кӗтсе илетпӗр.

Уява хатӗрленсе кунта ку тăрăхри çитӗннисемпе ачасен ал ӗçӗсен куравне хатӗрленӗ. Е.А. Николаева хăй тӗрленӗ турăшсемпе, тăван тавралăх илемне кăтартакан шăрçаласа тата канвапа тӗрленӗ ӗçӗсемпе хăех паллаштарчӗ. Ачасем хăйсене тӗрӗ тӗнчипе паллаштаракан аслă тусӗсенчен юлманни те куç кӗретех. Пăрăнса утас килмест вӗсен ӗçӗсен умӗнчен.

Курмалли-паллашмалли вара нумай кунта. Никольскин темиçе сыпăкри йăмăкӗ, шкулта вӗренекен Елена Платонова Никольскин йăх йывăçне ӳкерсе хатӗрленӗ. 11 сыпăкри пысăк çемьере – 800 çын. Никольскин пурнăçӗн ӗçӗ-хӗлӗпе ачасен пултарулăх ӗçӗсенчен пуçласа Никольскин музейӗнче тӗплӗн паллашма пулать. Кам кăна тӗлӗнмерӗ пулӗ çак музея килсе. Никольский ячӗпе хисепленекен Шупашкарти педагогика колледжӗн директорӗ В.В. Сапожников пир тӗртекен станок умне ларса ачалăхне аса илчӗ:

– 50 çул ларманччӗ кун пек станок умне, – терӗ вăл. Пир тӗртсех пăхрӗ. Унтан çапла хушса хучӗ:

– Пӗр çакăншăн кăна тав сăмахӗ каласа çитермелле мар Муркашсене. Аваллăха упранăшăн, тăван ентешсен ӗçне малалла тăснăшăн.

**«ЭПИР –НИКОЛЬСКИЙ ÇЫННИСЕМ»**

Пӗр хушă Никольскин ячӗ ытлашши янăрамарӗ пулин те, тăван Муркаш Енре нихăçан та манман ăна. Муркашсем Николай Васильевича сума суни, унăн ӗçне малалла тăсни вара район пуçлăхӗ Ю.А. Иванов ентешӗмӗре халалласа ирттернӗ савăнăçлă пухура, Никольский паркӗнче унăн бюсчӗ умӗнче ирттернӗ митингра тухса калаçнинчен те яр уççăн курăнать.

– Эпир Никольскин çыннисем. Пирӗн унăн ӗçӗсене малалла тăсмалла, – терӗ вăл. Ку вара чăннипех çапла пулнине ку таранччен тунă ӗçсем те çирӗплетсе параççӗ.

Ентешӗмӗр 120 çул тултарнă кун тӗлне вăл çуралнă ялта Купăрляра бюст лартрăмăр.125 çулхи юбилейӗ тӗлне унăн музейне çӗнетрӗмӗр, пуянлатрăмăр. Паян çак музей хăйӗн пӗчӗк юбилейне паллă тăвать: 10 çул тултарать. Республикăра кăна мар, Раççейре пӗрремӗш уçăлнă районти вӗрентӳпе культура центрӗсенчен пӗрне шăпах Сосновкăра уçрăмăр, моделлӗ библиотека йӗркеленчӗ кунта. Ентешӗмӗр çуралнă çурт вырăнне асăну палли вырнаçтартăмăр, Никольскин ашшӗ чӗртнӗ парка йӗркелесе çитертӗмӗр. Сосновкăри вӗрентӳпе культура центрне Никольскин ятне патăмăр. Районта çеç мар, республикăра та сума сăваççӗ Николай Васильевича. Шупашкарта унăн ячӗпе проспект хисепленсе тăрать, хамăр районта тата кӳршӗллӗ Элӗк районӗнче урамсене Никольскин ятне панă. Ю.Жуковпа Л.Туктина Никольский çинчен çырнă юрра Чăваш халăх артисчӗ Иван Христофоров шăрантарать.

**(Вӗçӗ 2-мӗш стр.).**

**Пӗрлехи информаци кунӗнчен**

## Тирпейлӗх хамăрах кирлӗ

Иртнӗ юн кун республикăра Пӗрлехи информаци кунӗ пулса иртрӗ. Çавна май пирӗн района Федераллă регистраци службин Чăваш Республикинчи уйрăмӗн ертӳçи, Чăваш Республикинчи тӗп патшалăх регистраторӗ Н.В. Прокопьева ертсе пыракан ушкăн килчӗ. Чи малтанах информаци ушкăнӗн членӗсем район пуçлăхӗпе Ю.А. Ивановпа тӗл пулчӗç. Юрий Александрович вӗсене районăн кăçалхи 4 уйăхри ӗçӗхӗлӗпе паллаштарчӗ, чи малтанах татса памалли ыйтусем çинче чарăнчӗ. Унтан, ушкăнсем çине пайланса, район администрацийӗн яваплă ӗçченӗсемпе пӗрле ӗç коллективӗсемпе тӗл пулчӗç. Чăваш Республикин Президенчӗн 2008 çулхи апрелӗн 25-мӗшӗнчи 42-мӗш номерлӗ «Чăваш Республикинчи 2009–2011 çулсенчи бюджет политикин тӗп енӗ çинчен» Указӗ, вырăнти хăй тытăмлăх органӗсен пурăнмалли çуртйӗрпе коммуналлă хуçалăх ыйтăвӗсемпе, территорие тирпей-илем кӗртессипе, тавралăха тата экологие сыхлассипе, усă курман çӗрсене ӗçе кӗртессипе, халăха пулăшу парассипе тата унăн пахалăхне лайăхлатассипе татса памалли задачисем, хăвăрт утассипе ирттернӗ Тӗнче кубокӗн пӗтӗмлетӗвӗсем, унăн Чăваш Республикишӗн тата Раçейшӗн обществăпа политика тата социаллă-экономика аталанăвӗ тӗлӗшӗнчи пӗлтерӗшӗ – акă мӗнле темăсем хускатрӗç хальхинче ӗç коллективӗсенче.

Район пуçлăхӗ Ю.А. Иванов, Федераллă регистраци службин Чăваш Республикинчи уйрăмӗн ертӳçи, Чăваш Республикинчи тӗп патшалăх регистраторӗ Н.В. Прокопьева, район администрацийӗн пурлăх тата çӗр хутшăнăвӗсен пайӗн ертӳçи А.В. Петров Чуманкасси ял тăрăхӗнче пулчӗç. Кунта ялти халăхпа, активпа тӗл пулчӗç.

Паллах, умри задачăсем çинчен калаçас умӗн халиччен мӗн туни çинче чарăнсан вырăнлă. Пуçтарăннисем район пуçлăхӗ Ю.А. Иванов районăн кăçалхи 4 уйăхри социаллă-экономика аталанăвӗпе паллаштарнине кăсăкلансах итлерӗç. Палăртмалла, районти пур отрасльте те иртнӗ çулхи çак вăхăтринчен ăнăçлă ӗçленӗ. Паян район Республика кунне кӗтсе илме хатӗрленет.

Медаль икӗ енлӗ, теççӗ-и-ха? Ялсене çут çанталăк газне кӗртнинех илерха. Сăмах май, пирӗн район республикăра ку ӗçе чи малтан вӗçлерӗ. Килте вут хутма пăрахнипе ял çыннисем пӗтӗм çӳп-çапа кам урама, кам анкарти хыçне, кам çырмана тухса пăрахма пуçларӗ. Чи малтан – килте тирпейлӗ пултăр, ытти çӗрте çӳп-çап йăваланни ним те мар. Çакăн пек шухăшпа пурăнма хăнăхрăмăр-ши? Кун пек юрамасть.

–Пирӗн ял культурине хăпартмалла. Хамăрăн ырă тӗслӗхпе хамăрăн ачасене мӗн пӗчӗкрен тирпей-илеме хăнăхтармалла, – терӗ Юрий Александрович.

**(Вӗçӗ 2-мӗш стр.).**

**Юбилей**

### *Саламлатпăр*



Юратнă аннене, мăшăра, кукамая, асаннене, Чуманкасси ялӗнче пурăнакан **Галина Прокопьевна БЕЛОВАНА** çуралнă кунӗ ячӗпе чи ăшă кăмăлпа саламлатпăр, çӗре çити пуç таятпăр, ырлăх-сывлăх сунатпăр.

Тавах сире чун-чӗре ăшшине пире парнеленӗшӗн, ытарайми ырă кăмăлушăн, эпир сирӗнпе савăнатпăр, мухтанатпăр.

**Саламлаканӗсем: мăшăрӗ, хӗрӗпе кӗрӳшӗ, ывăлӗсемпе кинӗсем, мăнукӗсем.**



Хаклăран та хаклă пирӗн чи сывăх çыннăмăра, аттене – Мăн Шаптак ялӗнче пурăнакан **Григорий Кириллович КИРИЛЛОВА** майăн 23-мӗшӗнче 75 çул тултарнă ятпа тата аттепе анне пӗрлешнӗренпе 50 çул çитнӗ ятпа чун-чӗререн тухакан мӗн пур ăшă та çепӗç туйăмсемпе саламлатпăр. Тавах сире ытарайми ырă кăмăлăршăн, чун ăшшине ним хӗрхенми пире парнеленӗшӗн, чуна йывăр чухне пирӗн чун ыратăвне хăвăр чӗрӳсем витӗр кăларнăшăн.

**Саламлаканӗсем: мăшăрӗ, икӗ хӗрӗпе кӗрӳшӗсем, ывăлӗпе кинӗ, 5 мăнукӗ, прамăнукӗ, хăтисемпе тăхлачисем, кӳршисем, тăванӗсем.**

**Республика кунне районта уявличчен 31 кун юлчӗ**

**РАЙОНТА: ӗнер, паян, ыран**

## Экономика форумне хутшăнатпăр

Республикăмăр кунне ирттернӗ май Чăваш Енре пысăк калăпăшлă ӗçсем пыраççӗ. Вӗсенчен пӗри – çӗртме уйăхӗн 20 – 21-мӗшӗсенче Шупашкарта Чăваш Республикин Экономика аталанăвӗн тата суту-илӳ министерстви ирттерекен «Управлени. Экономика. Аталану» экономика форумӗ. Унта республикăри кашни район презентациленӗ. Презентаци материалӗсемпе кашни район пирки ятарлă дисксем пулӗç. Форума тӗнчен тӗрлӗ кӗтесӗсенчен килекен делегацисем хак парӗç. Районсен унти ӳсӗмӗ инвестицисене çул уçассипе тӳрремӗн çыхăннă. Пирӗн район та çак кунсенче форума хăй пирки анлă калăпăшлă материалсем тăратрӗ.

## Чикӗ урлă нумаййăн çӳреççӗ

Çапла пӗтӗмлетме пулать паян Раççейри Федераллă Миграци Службин Чăваш Республикинчи Управленийӗн Муркаш районӗнчи регистраци документчӗсемпе паллашнă хыççăн. Территори пункчӗн пуçлăхӗ Зоя Михайловна Сорокина районта чикӗ урлă тухса çӳрекенсем пирки çапла каларӗ:

– Раççейри Федераллă Миграци Службин Чăваш Республикинчи Управленийӗн Муркаш районӗнчи территори пункчӗн тӗп ӗçӗ вăл – патшалăхăн миграци политикине тытса пырасси, çак ӗçри саккунлăха малта тăратасси, гражданство тата паспорт çинчен калакан законодательствăсене тӗрӗс пурнăçласси, ют çӗршыв гражданӗсем Раççей Федерацийӗн территорийӗнче пурăнас тата вăхăтлăх пулас йӗркене пăхăннине тӗрӗслесси. Хамăр çӗршыв гражданӗсене ют çӗршыва тухса çӳреме ют çӗршыв паспорчӗ туса парасси те пирӗн тивӗç.

Служба ӗçченӗсем вара хăйсен тивӗçне туллин пурнăçлаççӗ. Акă кăçалхи çу уйăхӗн 21-мӗшӗ тӗлне районта пурăнакан 67 çын ют çӗршыв паспортне илнӗ. Паян тепӗр 8 çын ыйтăвне пăхса тухас ӗç пырать. Танлаштарма, пӗлтӗр çак кун тӗлне районта ют çӗршыв паспортне илме кăмăл тунă 55 çын кăна пулнă.

Ют çӗршыв паспорчӗ илме кăмăл тăвакансене валли. Çакна пурнăçламалли пӗтӗм йӗркене Раççейри Федераллă Миграци Службин Чăваш Республикинчи Управленийӗн сайчӗ çинче (htt: // fmsch. cap. ru) вуласа пӗлме пулать. Кăçалхи мартăн 3-мӗшӗнчен пуçласа ют çӗршыва каяс текенсене ют çӗршыв паспорчӗсен çӗнӗ тӗсне параççӗ. Ун çинче гражданинăн сăн ӳкерчӗкне, хушамачӗпе ятне тата ашшӗ ятне, çуралнă кунне, паспорт номерӗпе ăна панă куна тата хăçанччен панине кăтартнă микрочипс вырнаçтарнă.

Мӗнех, Муркашсем те чикӗ урлă Мускава кайнă пекех кайма пуçларӗç пулас. Çакă мар-им-ха вăл пурнăç аталанăвӗн çӗн шайӗ? Хирӗçле хурав çук.

## Мăн Сӗнтӗрсем палăрчӗç

Иртнӗ кунсенче Раççей Федерацийӗн Чрезвычайлă лару-тăру министерствин пирӗн республикăри Тӗп Управленийӗ, Чăваш Республикин пушара хирӗç кӗрешекен служба, Пӗртӗм Раççейри ирӗклӗ пушар хуралӗн республикăри уйрăмӗ тата «Тантăш» хаçат редакцийӗ пӗрле ирттернӗ «Вут-çулăм тата ачасем» конкурса пӗтӗмлетрӗç. Пирӗн районтан та унта хастар ачасем сахал мар хутшăнчӗç, тӗрлӗ номинацисенче ытти районсенчи тантăшӗсемпе вăй виçрӗç. Чи пултарулли кăна çӗнтерӳçӗ пулни пирки вара никамăн та иккӗленӳ çук. «Чи лайăх алă ӗçӗ» номинацире ушкăнпа ăмăртса Мăн Сӗнтӗрти 3 «а» класс ачисем иккӗмӗш вырăна тухни вӗсемшӗн Республика кунӗ умӗнхи хăйсем тунă парне пулчӗ.

## Ку отрасль вăй илӗ-и?

Çакăн пек ыйту тухать районти пӗрлешӳллӗ хуçалăхсен январь-апрель уйăхӗсенчи ӗç кăтартăвне пăхса-тишкерсе тухсан. Сысна ӗрчетес ӗçре вара уйрăмах ыйтуллă самантсем чылай. Район çак тапхăрта 831,3 тонна аш-какай туса илнӗ пулсан, 316,8 тонни çеç (пӗлтӗрхинчен 38,8 тонна сахалрах) сысна отраслӗнчен. Сысна какайӗ туса илесси сахалланни выльăхсен йышӗ пӗчӗкленнипе тӳрремӗнех çыхăннă. Çулталăк хушшинче сыснасен йышӗ пӗрлешӳллӗ хуçалăхсенче 5760 пуç чакнă. Тăватă уйăх хушшинче иртнӗ çулхи çак вăхăтринчен 3085 çура сахалрах илнӗ: 5653 çура. Ку ӗç Суворов яч. хис., «Сеятель», «Лидер» хуçалăхсенче çеç пӗчӗккӗн малалла кайнă.

**А. БЕЛОВ хатӗрленӗ.**

**Çырăнтару – 2008**

### «Çӗнтерӳ ялавне» малалла çырăнтараççӗ

**Район хаçатне 2008 çулхи иккӗмӗш çур çулта илсе тăма малалла çырăнтараççӗ.**

**Ултă уйăха çырăнса илмелли çӗнӗ хак - 181 тенкӗ те 80 пус. Малтанхипе танлаштарсан, райхаçата ултă уйăха çырăнса илмелли хак 12 тенкӗ те 18 пус çеç ӳсрӗ.**